Паянхи чи çивĕч ыйтусемпе

# Пĕтĕм йышпа, пĕтĕм вăйпа – вырмана

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Паян патшалăх ял хуçалăхне аталантарма пулăшать. Ӳсен-тăран культурисене хӳтĕлеме района 1 миллион та 180 пин, дизель топливи илме 2 миллион укçа-тенкĕ уйăрнă пулсан, вĕсемпе усă курнă. Документсене çеç тăратмалла хуçалăхсен. Элитăллă вăрлăх туянма та 2 миллион тенкĕ çурă укçа уйăрнă пирĕн района. Çакăнтан 824 пин тенкипе усă курнă ĕнтĕ. Апла пулсан, патшалăх пулăшнă чух мĕншĕн тăрăшса ĕçлес мар. Элитăллă вăрлăх туса илсен, кайран сутмалăх та пулать вĕт. Ак, ăçта укçа тумалли тепĕр çул. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе хуçалăхсен çине тăрса ĕçлемелле.

Ăратлă выльăх-чĕрлĕх туянма 3 миллион та 750 пин тенкĕ укçа-тенкĕ уйăрнă пулсан, вĕсенчен 2 миллион та 700 пинĕ – пысăк продуктивлă выльăх-чĕрлĕх тытма. Иртнĕ çул кашни ĕнерен 3 пин ытла килограмм сĕт сунă 9 хуçалăх паян çак çăмăллăхпа усă курать. Хальлĕхе палăртнă тăрăх, кăçалхи кăтартусемпе çитес çул 14 хуçалăх тивĕçме пултарать çак субсидие. Шел пулин те, иртнĕ уйăхшăн пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен сăвăм чакнине пула хăш-пĕр хуçалăхсем çак çăмăллăха илеймерĕç.

Сĕт – паян хуçалăха куллен чĕрĕ укçа паракан çăл куç. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе кăтартăва чакарни хуçалăх ертӳçисене чыс кӳмест. Паян районĕпе куллен вăтамран кашни ĕнерен 11,3 килограмм (пĕлтĕрхинчен 0,3 килограмм нумайрах) сĕт сăваççĕ пулсан, "Чемеево" хуçалăхра пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 3,1 килограмм, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 2,3 килограмм сĕт ытларах сăваççĕ куллен кашни ĕнерен. Акă, камсенчен тĕслĕх илмелле.

Ку тĕлĕшпе тăрăшни вара пĕрре те сая каймасть, мĕншĕн тесен кăçал республикăна выльăх-чĕрлĕх сферине аталантарма 36 миллион тенкĕ уйăрнă пулсан, çитес çул вăл 70 миллионпа танлашмалла. Апла пулсассăн укçа-тенкĕ ĕçлесе илмелли çулсем аслансах пыраççĕ. Тăрăшмалла çеç. Çине тăрсан ĕç кайнине çирĕплетекен тĕслĕхсем вара районта та çителĕклех. Сысна ашне туса илессипе кăтартусем лайăхлансах пыраççĕ. Сыснасен йышне пĕлтĕрхинчен 40 процент ытла ӳстернĕ. Акă, нумаях пулмасть республикăна Эстонирен 53 ăратлă сысна ăçисене илсе килнĕ пулсан, 43-шне пирĕн район туяннă. "Свобода" – 20, Е. Андреев яч.хис. хуçалăх 10, "Геройпа" "Чемеево" 10шар, Суворов яч. хис. хуçалăх 3. Пурĕ 1,5 миллион тенкĕлĕх "Агро-Урожай" хăй кăна 250 сысна илесшĕн. Районти 8 хуçалăх сыснасене типĕлле тăрантарасси çине куçнă: "Волга", "Герой", "Лидер", "Оринино", "Рассвет", "Восток", Ильич, Ленин яч. хис. хуçалăхсем.

Патшалăх уйрăм хушма хуçалăха аталантарма пулăшнине те çынсем ăнланса илчĕç ĕнтĕ. Паянхи куна 465 çын 72 миллион та 722 пин тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвне илнĕ. Паян çав укçа-тенкĕне 100 лаша вăйлă тракторсем – Т-25, МТЗ-80, 3,5 тонна виçене çитиччен автомашинăсем илме те ирĕк панă. Çакă хăех ĕçлекенĕн çул уçă иккенне кăтартса парать.

Наци проекчĕ ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелессинче те пулăшу парать. Паянхи куна Юнкă ял тăрăхĕнче 2 ял хуçалăх кооперативĕ йĕркеленĕ ĕнтĕ. Ку тĕлĕшпе Москакасси, Катькас, Ярапайкасси, Ильинка ял тăрăхĕсен тата "Моргаушагропромснаб" территорийĕнче ял хуçалăх кооперативĕсем уçма документсем хатĕрлеççĕ. Вĕсем, тĕпрен илсен, сĕт пуçтарассипе тата кăлпасси тăвассипе ĕçлĕç. Çакă халăха туса илнĕ выльăх-чĕрлĕх продукцине вырăнтах вырнаçтарма май парать.

Нумай-нумай ыйтупа пĕрле паян хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрленессипе те çине тăрса тимлемелле. Шел пулин те, Е. Андреев яч.хис. хуçалăхра, Михайловăн, Отеновăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче, "Передовикпа" "Ударникра" ку тивĕçлĕ шайра мар. Чапаев яч. хис. хуçалăхра вара сысна ферми хĕле хатĕр мар. "Сеятель" хуçалăхра та ку ĕçе пуçăнман.

Асăрхарăр пулĕ, алă усса ларма пĕр самант та вăхăт çук паян ял ĕçченĕн. Çавăнпа та паян пĕтĕм вăя вырмана, ял хуçалăхĕнчи ĕçе мобилизацилемелле. Кашни отраслĕн паян çак ĕçре хăйĕн вырăнне тупмалла. Культура ĕçченĕсен уя тухса халăх кăмăлне çĕклемелле. Библиотекарьсен çĕнĕ хыпарсемпе паллаштармалла. Никамăн та айккинче юлмалла мар. Халăхпа пĕрле пулмалла.

Район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сăмахĕсем кусем. Унпа килĕшмесĕр тăма ниепле те май çук. Мĕншĕн тесен шăпах çакăнтан килет паян пирĕн район аталанăвĕ. Апла пулсан – пирĕн пурнăç та.

**Л. ПАВЛОВА.**

Обществăлла йĕркелĕхпе хăрушсăрлăхшăн

# Лайăх енне улшăнусем çук мар

Районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракансем чи малтанах хăйсен тивĕçĕ граждансен саккунлă интересĕсене хӳтĕлесси, право йĕркине сыхласси тата обществăлла йĕркелĕхе тивĕçлĕ шайра тытса тăрасси тесе шутлаççĕ. Тĕллевлĕ ĕçлесе пынă май, ку енĕпе лайăх еннелле улшăнусем çук мар. Иртнĕ çичĕ уйăх итогĕсем те çавна çирĕплетсе пăраççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа район территорийĕнче пĕтĕмпе 412 преступлени регистрациленĕ. Вăл шутра ытларах йывăр мар преступленисем. Кун пеккисем 236 пулнă е 57,3 процент. Çын вĕлернĕ тĕслĕхсем иртнĕ çул çав вăхăтра 3 пулнăччĕ, кăçал вара 1. Пурлăха çаратнă-вăрланă тĕслĕхсем пĕлтĕр 166 пулнăччĕ, кăçал – 158.

Преступленисене уçса парасси 74,5 процентпа танлашать. Республикăри вăтам кăтарту вара 53,1 процент кăна. Уйрăмах йывăр преступленисене 100 процентпех уçса панă. Йывăр преступленисене уçса парасси вара пĕлтĕрхи шайран чакрĕ, 91,5 процент пулнă пулсан, кăçал 72,1 процентпа танлашрĕ. Çавна та палăртса хăвармалла. Преступленисене уçса парасси çине вĕсен хисепĕ ӳссе пыни те витĕм кӳрет. Акă, отчетлă тапхăрта пĕлтĕр шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем 213 преступление уçса панă пулсан, кăçал – 287.

Следовательсем патĕнче производствăра 224 уголовнăй ĕç пулнă. 89 уголовнăй ĕçе вĕçленĕ, айăплав заключенийĕсемпе 82 уголовнăй ĕçе суда ярса панă.

Дознавательсем производствăна 122 уголовнăй ĕç илнĕ, айăплав акчĕпе прокурор патне 70 ĕç ярса панă. Уголовнăй ĕçсене тĕпчесе хушма 26 факт тупса палăртнă. Тĕпчев ĕçĕсене туса ирттермелли срока пăснă тата суда ярса панă ĕçсем хушшинче тӳрре кăларакан приговор йышăннă тĕслĕхсем пулман.

2006 çулхи 7 уйăх хушшинче 180 çын уголовнăй майпа айăпламалли ĕçсем тунă, çав шутран 20 хĕрарăм тата çул çитмен çамрăксем 22. 177 çынна уголовнăй майпа айăпланă. Ниçта та ĕçлеменнисем 181 преступлени, ушкăнпа 20 преступлени, ӳсĕрле 72 преступлени, унччен судпа айăпланнисем 48 преступлени тунă. "Шырав" ушкăн преступлени тунă тесе шутлакан шанчăксăр 40 çынна тытса чарнă, 40 преступление уçса панă.

Криминаллă милицин тĕп задачисенчен пĕри преступленисене уçса парасси пулса тăрать. Уголовнăй шырав уйрăмĕн ĕçĕ-хĕлĕ вара ытларах уйрăм çынсене хирĕç тăвакан йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисемпе, саккуна пăсса наркотиксем саракансемпе, хĕç-пăшалпа çыхăннă преступленисемпе кĕрешессипе, преступниксемпе хыпарсăр çухалнисене тупса палăртассипе çыхăннă. Çавăнпа та кунта професси тĕлĕшĕнчи хатĕрленӳ, вĕренӳ шайĕ тата харпăр хăйĕн пахалăх енĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Криминаллă милици енĕпе 85 преступлени тунă. Вĕсене уçса парaслăх вара 79,1 процентпа танлашнă. Çулталăк пуçланнăранпа, иртнĕ çулхисене шутласан, 25 преступник шыравра пулнă, вĕсенчен 16 çынна тытса чарнă.

Экономика тĕлĕшпе преступленисем тунине тупса палăртнă май должноçри çынсем йĕркене пăснă, коррупци тата взятка илнĕ тĕслĕхсене тăрă шыв çине кăларассипе çине тăнă. Ку тĕлĕшпе криминаллă милици енĕпе 24 преступлени регистрациленĕ. Вĕсене пурне те оперативлă даннăйсем тăрăх палăртнă.

Право тĕлĕшĕнчи йĕркелĕхпе обществăлла хăрушсăрлăха тивĕçтерессипе обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕ сахал мар ĕç туса ирттерет. Ку енĕпе çине тăнипе обществăлла вырăнсенче преступленисем тăвассине, унчченхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 16,7 процент чакарма май килнĕ. Çав вăхăтрах урамсенче преступленисем тăвасси ӳснĕ, 4-па танлашнă.

Хальлĕхе пурлăха çаратнă тĕслĕхсене тупса палăртассипе ĕçсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ. Иртнĕ тапхăрта кун пек тĕслĕхсене 136 регистрациленĕ, вĕсене тăрă шыв çине кăларасси 43,1 процентпа танлашнă. ЧР Шалти ĕçсен министерствипе районти шалти ĕçсен пайĕн планĕсемпе килĕшӳллĕн 100 ытла профилактика мероприятийĕ, операцисемпе рейдсем ирттернĕ. Вĕсенче правăна пăснă тĕслĕхсене 3792 тупса палăртнă.

Районти шалти ĕçсен пайĕнче 327 çын учетра тăрать. Вĕсенчен условнăй майпа маларах ирĕке кăларнисем 46 çын. Çав шутран пĕри тепĕр хут преступлени тунă. Унччен ирĕкрен хăтарнисем, халĕ таврăннисем 136 çын. 26 çын хронически алкоголик тата наркоман шутланать. Çемьери йĕркелĕхе пăсакансене 42 çынна учета илнĕ.

Çул çитмен çамрăксем 13 преступлени тунă. 59 çамрăка профилактика учетне илнĕ. Çамрăксем административлă майпа правăна пăсни пирки 131 протокол çырнă.

Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх уйрăмĕ çулсем çинчи инкексене сирессипе уйрăм ĕçсем туса ирттерет. Çавна май автобуссем çӳрекен 39 çул-йĕре тĕрĕсленĕ, 34 предписани çырнă. Çулсене тивĕçлĕ шайра тытса тăманшăн должноçри 5 çынна административлă майпа ответ тыттарнă. Çул-йĕр условийĕсене пула çулсем çинче пулнă инкексене 5 тупса палăртнă.

Çулсем çинче инкексем 30 пулнă, вĕсенче 10 çын вилнĕ тата 40 çын аманнă.

Çул-йĕр правилисене пăсакан водительсем тĕлĕшпе административлă протоколсем 1209 çырнă. Руль умне ӳсĕрле ларнăшăн 11 водителе тытса чарнă. Çул-йĕр хăрушсăрлăх уйрăмĕн сотрудникĕсем хутшăннипе 11 преступлени уçса панă.

Обществăри йĕркелĕх, тăнăçлăх хамăршăнах. Çавăнпа та преступлени тумалли çул-йĕре хуплас, преступленисене асăрхаттарас, тунă преступленисене уçса парас енĕпе шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсемпе пĕрле кашниййĕн хăйĕнчен мĕн килнине тăвасчĕ.

**А. СРЕТИНСКИЙ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн штаб пуçлăхĕ, милици майорĕ.**

РФ Патшалăх Думин депутачĕпе иртнĕ тĕл пулуран

# Мускавсем те курчĕç Муркашсен ĕçне. Пĕлчĕç вĕсен шухăшне

Августăн 18-19-мĕшĕсенче пирĕн республикăра РФ Патшалăх Думин депутачĕсем пулчĕç. Тĕпрен илсен вĕсем Чăваш Енте наци проекчĕсем епле пурнăçа кĕнипе кăсăкланчĕç.

РФ Патшалăх Думин граждансен сывлăхне сыхлассипе ĕçлекен Комитет Председателĕ Т.В. Яковлева ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕпе Н.В. Суслоновăпа пирĕн районта пулчĕ. Чи малтанах вĕсем район администрацийĕн ларусен залĕнче халăхпа тĕл пулчĕç.

Татьяна Владимировна чи малтанах наци проекчĕсем пирки калаçу пуçарнă май çакна палăртрĕ:

– Вăл е ку ĕçе тума тăрсан, укçа нихăçан та çитмест. Çак ыйтăва татса парас тесе ĕнтĕ çĕршывра наци проекчĕсем ĕçлеме пуçларĕç.

РФ Патшалăх Думин депутачĕ çав наци проекчĕсем пĕр çуллăх маррине, малалла та ĕçлессине палăртрĕ. Вĕсемпе килĕшӳллĕн епле улшăнусем пулса иртесси çинче чарăнчĕ. Тĕплĕнрех вăл сывлăха сыхлас ĕçри наци проекчĕ çинче чарăнчĕ. Унăн сăмахĕсем тăрăх çакă паллă. Малашне çĕршывра ачасен, хĕрарăмсен проблемисем çине нумайрах тимлĕх уйăрма палăртнă. Çакă ахальтен мар. Сахал ача вилет-и паян çĕршывра вăл е ку чиртен? Т.В. Яковлева сăмахĕсене пĕр улăштармасăр илсе кăтартатăп.

– Тепĕр чух вĕсем вилнин сăлтавĕ - çак ачасем Раççейре çурални.

Мĕне пĕлтереççĕ-ха çак сăмахсем? Пирĕн çĕршывра паян пысăк технологиллĕ медицина оборудованийĕсем çитменни. ВИЧ-инфекциленнĕ ачасем ăна тупса палăртсанах Раççейре 18 пулнă пулсан, 2003 çулта вĕсен йышĕ 3,5 пине çитнĕ. Иртнĕ çул ку кăтарту 14 пинпе танлашнă. Чĕре çурăлса каймалла кăтарту. Çакăн чухлĕ ачашăн паян çуралсанах çут çанталăк приговор кăларнă.

Йывăр çын хĕрарăмсене малтанах тĕрĕслесе, ВИЧ-инфекциллине тупса палăртсан, ачана хырăмра чухнех сиплеме пуçласан, вăл сывă çураласса паян медицина çирĕплетсе пачĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та малашне ВИЧ-инфекциленнисене сиплес ĕçе пысăк тимлĕх уйăрма палăртаççĕ. Çавăн пекех гепатитран сыхлассипе сиплесси çине 2,5 хут, тĕрлĕ чиртен прививкăсем тăвасси çине 1,3 хут ытларах укçа-тенкĕ уйăрма палăртаççĕ.

Ача çуратма сертификатсене мĕншĕн пама пуçларĕç, тетĕр. Ку вăл больницăсенчи хĕрарăмсен консультацийĕсен, ача çуратмалли çуртсен ĕçне лайăхлатма пулăшать. Мĕншĕн тесен паян çуралакан ачасен 75 процентĕ патологипе çуралать. Урăхла каласан, вăл е ку чирпе. Çавăнпа та ачасемпе хĕрарăмсен ыйтăвне мала хумасăр ниепле те май çук.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.В. Путин Федераци Пухăвне янă çырура та çак тема тĕп вырăнта. Татьяна Яковлева хăйĕн сăмахĕнче ун çинче те тĕплĕн чарăнчĕ. Вăл каланă тăрăх, паян Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен 90 процентĕнче ĕçлемен хĕрарăмсене ача пособине тӳлемеççĕ. Каласа хăвармалла, пирĕн республика ку енĕпе те ырă тĕслĕх кăтартать: ĕçлеменнисем те ача çуратнипе çыхăннă пур çăмăллăхсемпе те усă кураççĕ. Çитес çултан пуçласа вара ĕçлеменнисене, 1-мĕш ача çуратсан, ача çулталăк çурăна çитичченхи пособине 1,5 пинпе, 2-мĕш ача çуралсан, 3 пин тенкĕпе танлашмалла. Ĕçлекенсен юлашки 12 уйăхра ларнă вăтам ĕç укçин 40 процентĕнчен кая пулмалла мар.

Килĕшетĕр пулĕ тетĕп. Ĕçлекенсене ĕç укçин 40 процентне тӳлени пĕчĕк ĕç укçи илекенсемшĕн хĕпĕртемелли япала мар. 3 пин е унран та каярах ĕç укçиллĕ хĕрарăма вăл мĕн чухлĕ пулать. 1,5 пин тенке те çитмест. Çак вырăн хăех тӳрлетӳ кĕртме ыйтать. Çавăнпа та район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тĕл пулура Татьяна Владимировнăна çак вырăна çĕнĕрен пăхса тухма сĕнӳ тăратма ыйтрĕ: 40 процент, анчах ĕççĕррисене паракан суммăран кая мар. РФ Патшалăх Думин граждансен сывлăхне сыхлассипе ĕçлекен Комитет Председателĕ çапла тума шантарчĕ.

Çĕнĕ çултан кĕртме палăртнă тепĕр çĕнĕлĕх вăл – 1 ачашăн ача садне тӳлемелли суммăн 20 процентне, 2 ачашăн 50 процентне, 3 ачашăн 70 процентне федераллă бюджетран саплаттарасси. Т.В. Яковлева çакăн çинче те чарăнчĕ. Çавăн пекех 2-мĕш ача çуралсан паракан амăшĕн капиталĕ çинче те. Ăна уйрăм счет çине куçарасси ăнăçсăр çемьесен йышĕ ӳсессинчен сыхлать. Татьяна Владимировна 3-мĕш ача çуралсан та амăшĕн счечĕ çине çавăн чухлех - 250 пин тенкĕ куçарассине палăртрĕ. Хальлĕхе ку проект çеç-ха. Ăна тӳрлетӳсем кĕртсе пурнăçа кĕртиччен те вăхăт нумаях юлмасть.

Халĕ кашнине хумхантаракан тепĕр ыйту çинче чарăнар. Паян вилекенсем çуралакансенчен палăрмаллах нумай. Çынсем мĕн сăлтавпа ытларах вилеççĕ? Чĕре чирĕсенчен е ытти чирсенчен. Çавăнпа та наци проекчĕпе килĕшӳллĕн паянхи кун ыйтакан медицина оборудованийĕсене ытларах туянма укçа-тенкĕ нумайрах уйăрма палăртаççĕ.

Тĕл пулура Татьяна Владимировна стационарта ĕçлекен шур халатлă сывлăх хуралçисене те савăнтарчĕ. Çитес çултан пуçласа вĕсен те ĕç укçи ӳсмелле, стационарсенчи условисем те лайăхланмалла.

– Çак çăмăллăха пурнăçа кĕртме пуçлакан регионсем шутне Чăваш Республики те кĕтĕр, тесе çине тăрăп, - шантарчĕ вăл.

ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕ Н.В. Суслонова хăйĕн сăмахĕнче сывлăха сыхлас ĕçри наци проекчĕ республикăра епле пурнăçланни çинче чарăнчĕ. Укçа-тенке, ĕç пахалăхне лайăхлатма пани çинче чарăнчĕ. Çавăнпа та малашне "Васкавлă пулăшу" уйрăмĕсем епле ĕçленине контроллеме пуçлаççĕ. Пулăшу ыйтнă хыççăн мĕн вăхăтра чирлĕ çын патне çитеççĕ, мĕн хушăра больницăна илсе çитереççĕ, т. ыт. те.

– Наци проекчĕ пурнăçа епле кĕни, вăл халăхшăн усăллă пулнине халăх хăех курать, хак парать, -терĕ вăл.

– Усси пысăк. Пирĕн района çĕнĕлĕх илсе кĕчĕ вăл – ку залра ларакансен шухăшĕ. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртрĕ.

Çĕнĕ çултан пуçласа 57 медицина ĕçченĕн, июлĕн 1-мĕшĕнчен ФАП 38, "Васкавлă пулăшури" 15 медицина ĕçченĕн ĕç укçи ӳсрĕ. Хĕрарăмсен консультацийĕсемпе ача çуратмалли çуртра пур условисем те пур. Эмелсем çителĕклĕ тата тӳлевсĕр. 5500 ачана икĕ хутчен гепатитран прививка тунă, хĕрлĕ шатраран – 1 пин ачана. Хушма диспансеризаци ирттерессипе те ĕçсем пыраççĕ. Наци проекчĕпе килĕшӳллĕн виçĕ УЗИ, çичĕ ЭКГ аппаратне, лаборатори валли 2 комплект оборудовани, "Васкавлă пулăшун" 6 машини килсе çитнĕ. Тепĕр 2,5 миллион тенкĕлĕх рентген тата ытти оборудовани килмелле.

РФ Патшăлăх Думин депутачĕ залра ларакан вĕрентекенсене те вĕсен ĕç укçи ӳстерессипе ĕçлессине шантарчĕ.

Вăл пухăннисен ыйтăвĕсем çине те туллин хуравсем пачĕ. **"Таса шыв" программа Раççей шайĕнче хăçан пулать"** тесен ыйту çине вăл çапла хуравларĕ:

– Ку таранччен техника тĕлĕшĕнчен мĕнле шыва таса шыв тенине çирĕплетекен регламент пулман. Халĕ ку тĕлĕшпе ятарлă комисси туса хунă. Ĕçлетпĕр, - терĕ вăл.

Тепĕр ыйту.

**– Ача сачĕсемпе шкулсенчи медсестрасен укçи хăпарать-и?**

Хурав.

– Вĕсен ĕç укçине Вĕрентӳ министерстви урлă хăпартасси пирки асăннă министерствăпа калаçусем пыраççĕ. Татьяна Яковлевна **электролинисем кĕртес ĕçре пулăшу кирлĕ** пирки Муркашсем панă сĕнĕве те çитес çĕре çитерме шантарчĕ. Залра ларакансен **массăллă спорта аталантарас ĕçре пулăшу кирлĕ** пирки каланă ыйту çине вăл: "Раççейри массăллă спорта аталантарасси" программа хатĕрленине палăртрĕ.

– Паян наци проекчĕсем пурнăça кĕни – пуçлăмăшĕ çеç-ха. Ырă улшăнусем – малалла, - терĕ. Ку вара пире çунат хушать.

Тĕл пулу хыççăн çӳллĕ шайри хăнасем Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче пулчĕç.

Татьяна Владимировна Нискассисен ĕçĕ-хĕлĕн опычĕпе паллаштарас тĕллевпе медицина сестрисен ĕçĕ-хĕлĕпе тата медицина ĕçĕнчи çĕнĕлĕхĕсем çинчен Нискассисем çырнă наука ĕçĕсене Мускава илсе кайрĕ. В.М. Басяев ертсе пыракан коллектив ĕç-хĕлĕпе хăнасем кăмăллă пулчĕç.

**Л. ТУКТИНА.**